# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

Вăрнар район хаçачĕ

2011 çул
çурла/август/ уйăхĕн 17-мĕшĕ
юн кун
95/10412/ №
Хакĕ ирĕклĕ


## «Химик – Август» Кубока тавăрчĕ

### Чăваш ен Кубокне вăрнарсем Физкультурник кунĕнче Йĕпреçри футбол клубĕнчен 1:0 шутпа выляса илчĕç

**Çичĕ финалтан улттăмĕш (!) хут. Футболистсемшĕн пĕлтĕр кăна ăнаçлă сезон пулмарĕ, маларахри çулсенче вара Кубок пилĕк çул харăс химиксен аллинчен каймарĕ. Çакăншăн футбол федерацийĕ ăна командăра яланлăх хăварма йышăну турĕ.**



**СПОРТ**

Кăçал командăна Роман Шалин çĕнтерӳ парнелерĕ, вăлах «Чи лайăх вылявçă» ята çĕнсе илчĕ.

Шупашкарти «Олимпийский» стадионта иртнĕ финала Вăрнартан хамăр спортсменсемшĕн «чирлекенсем» виçĕ автобуспа тапранчĕç.

Унччен вара Физкультурник кунне халалласа Вăрнарти «Химик» стадионта тахĕрӳ ăмăртусем пычĕç. Вăрнар хула, Ершепуç, Калинино, Ярмушка, Кульцав, Хирпуç, Упнер, Малти Ишек ял поселенийĕсенчен килнĕ спортсменсем минифутболла, волейболла выляса (официаллă спонсорĕсем «Справедливая Россия» тата «Единая Россия» партисем пулчĕç), канат туртса, чупса тупăшрĕç.

Чăн спорт тусĕсене çак кун çав тери шăрăх çанталăк тăни та хăратмарĕ. Çапах та хăрушсăрлăх пирки асăрхаттарсах тăчĕç, медицина ĕçченĕсем, йĕрке хуралçисем юнашарах пулчĕç.

Спортсменсене район пуçлăхĕ Анатолий Кузьмин, «Химик» спорт клубĕн председателĕ Евгений Захаров, «Единая Россия» тата «Справедливая Россия» поли-

2 стр.

**ХАМĂРĂННИСЕНЕ ПĔЛĔРĬ**

## Китайран – «кĕмĕлпе»

Вăрнар спортсменĕ Вячеслав Ластухин Китайри Шэньчженьре пыракан Пĕтĕм тĕнчери универсиадăра йывăр атлетика енĕпе кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

77 килограмлă виçе категорийĕнче вăл 150 килограмлă штангăна çăмăллăнах çĕкленĕ, кăкăртан тĕксе 182 килограмм йăтнă. Пĕрлехи сумма 332 килогрампа таплашнă. «Эпĕ кĕмĕл медале те хавас. Ку манăн пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш çитĕнӳ. Унччен кунашкал сумлă ăмăртура пĕрре кăна хутшăннă: Европа первенствинче тăваттăмĕш вырăн йышăннăччĕ. Универсиада хыççăн Раççей Кубокĕнче континент чемпионатне хутшăнма тивĕçессишĕн тăрăшăп», – пĕлтернĕ çамрăк спортсмен.

Вячеслав Ластухин йывăр атлетикăпа Вăрнарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче Юрий Агилов тренер-преподаватель тивлечĕпе туслашнă. Олимп резервисен училищинче вĕреннĕ, халĕ Физкультурăн Раççей патшалăх университечĕн Çĕнĕ Шупашкарти филиалĕн студенчĕ. Чăваш ен спорт министерствин А.Игнатьев ячĕллĕ спорт хатĕрленĕвĕн центрĕн чи вăйлă спортсменĕсенчен пĕри шутланать. Раççей первенствисен нумай хутчен, Раççей çамрăкĕсен спартакиадин кĕмĕл тата ытти ăмăртусен призерĕ.

С.ЧИКМЯКОВА.

## Юбилей тĕлне – грамотăсем



**Иртнĕ эрне кун, строительсен професси уявĕ умĕн, «Вурнарская» МСО» акционерсен хупă обществин коллективĕ организаци йĕркеленнĕренпе 50 çул çитнине паллă турĕ. Чи хастар вăй хуракансене, строительство ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсемпе палăрнисене – пĕтĕмпе 35 çынна – çак паллă кун тĕлне тĕрлĕ шайри наградăсемпе чысланă.**

**ЧЫС-ХИСЕП**

Лидия Захарова штукатурпа Алексей Сивкин каменщик – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн, виççĕн ЧР Хула строительствипе обществăлла инфраструктура аталанăвĕн министерствин, чылайăн район администрацийĕн, Вăрнар хула поселенийĕн администрацийĕн Хисеп грамотисене тивĕçнĕ.

Роза Большакована, Нина Павлована, Иван Сандомирова, Виктор Степанова, Герман Яковлева Чăваш ен Строителĕсен союзĕн «Строительство ĕçĕнче палăрнăшăн» паллипе наградăланă.

И.ЯКОВЛЕВА.

*Сăн укерчĕкре: ЧР Хула строительствипе обществăлла инфраструктура аталанăвĕн министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ Сергей Никифоров аслă мастер.*

## Тырă акма тухнă

«Кĕрхи тырра кĕл çине ак», – теççĕ ваттисем. Аслă ăрурисем ăса вĕрентнине Алексей Яковлевич Игнатьев фермер хуçалăхĕнче тĕпе хураççĕ. Ĕнер ку организацире районти аграрисенчен чи малтан хура çĕре шуратма тухнă. Кĕрхи тулла вăхăтра акас тесе уйхирте виçĕ трактор ĕçлет.

Хамăр инф.

## Ĕçе аван хакланă

**РФ МЧС-ĕн республикăри Тĕп управленийĕ Кĕçĕн Çавал çинчи плотинара тухма пултаракан чрезвычайлă лару-тăрăва пĕтерессипе вĕренӳ irttерне, районти службăсем техногенлă авари вăхăтĕнче хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлама мĕнле хатĕррине тĕрĕсленĕ.**

**ХĂРУШСĂРЛĂХ**

Шыв пухăнмалли вырăн – уйрăмах хăрушă объект. Кĕçĕн Çавал çинче 12 миллион кубла метр шыв тăрать, ку пысăк вăй. Инкек тухас-тăк, шыв Вăрнар–Йĕпреç çулăн пайне, дача çурчĕсене, Çĕнĕ Мĕлĕшри çуртсене сиенлеме пултарать. «Гидроресурс» учреждени директорĕ Камил Салихов гидротехника сооруженине хута яриччен хăрушсăрлăх декларацине илмеллине каланă. Çак тĕллевпе йĕркеленĕ те вĕренĕве. Унăн планĕпе килĕшӳллĕн, вăйлă çумăрсем хыççăн Кĕçĕн Çавал çинчи шыв тăракан вырăнта çĕр плотини йăтăнса чрезвычайлă лару-тăру тухас хăрушлăх пур. Çакăн çинчен «Гидроресурс» представителĕ районти пĕрлĕхлĕ диспетчер службине тата чрезвычайлă лару-тăрусене асăрхаттарассипе тата ликвидацине ирттерессипе тимлекен комиссие пĕлтернĕ. Темиçе минутранах пушар сӳнтерекенсем, газпа электроэнерги службисем, полици сотрудникĕсем, медицина пулăшăвĕ тата ыттисем килсе çитнĕ. Р.Салихов пулăшу службисен ертӳçисене мероприятисен йĕркипе паллаштарнă. Плотина çинче условнăй авари пулăмĕсене пĕтернĕ вăхăтра Çĕнĕ Мĕлĕшре çынсене хăвăрт эвакуацилленĕ.

МЧС-ăн республикăри Тĕп управленийĕн представителĕсем вĕренĕве аван хакланă.

И.ЯКОВЛЕВА.



## ÇАНТАЛĂК

| Кĕçнерни кун | Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|---|
| 18.08 | 19.08 | 20.08 |
| +22 | +23 | +19 |
| +10 | +10 | +11 |

«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.

# Чиркӳ алăкĕсем кĕçех уçăлĕç



**Турра ĕненекенсем тахçантанпа кĕтнĕ кунччен нумай юлмарĕ тесе халĕ хăюллăнах калама пулать – Вăрнар чиркĕвĕн çĕнĕ çурчĕн алăкĕсем кĕçех уçăлĕç.**



**ТĔН**

Паллă ĕнтĕ, Асап нумай тӳснĕ Çветтуй Георгий Çĕнтерӳçĕ чиркĕвĕн никĕсне вун тăватă çул каялла хывнă. Çак хушăра халăх тата хăш-пĕр спонсорсен пулăшăвĕпе вуншар миллион тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă. Хальхи вăхăтра Çĕнĕ Шупашкарти ăстасем иконостас вырнаçтарассипе тимлеççĕ. Çак ĕçе вĕçленĕ хыççăн чиркӳн çĕнĕ çуртĕнче кĕлĕ ирттерме пуçăнĕç.

◆ Вăрнар чиркĕвĕн настоятелĕ Александр атте Çĕнĕ Шупашкартан килнĕ ăстасемпе.
◆ Иконостаса вырнаçтарма тытăннă.

*Р.ВОЛКОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.*

# Администраци тытăмне улăштарнă

Чăваш Республикин Президенчĕ 2011 çулхи çурла уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Чăваш Республикин Президенчĕн 2010 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче кăларнă 115-мĕш Указне улшăнусем кĕртесси çинчен» кăларнă 73-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Президенчĕн Администрацийĕн тытăмне улăштарнă.

Йĕркелӳ ĕçĕн управленийĕнчен Шалти политика управленине туса хунă. Пурнăçлакан тивĕçсене кура Патшалăхăн гражданла службипе кадрсен управленийĕн тата Информаципе тивĕçтерекен управленин ячĕсене улăштарнă – Патшалăхăн гражданла службин, кадр политикин тата патшалăх наградисен управленине, Информаципе тишкерӳ тивĕçтерĕвĕн управленине туса хунă.

Президент Администрацийĕн тытăмĕн çак улшăнăвĕсем штат йышне ӳстермеççĕ.

**ПРАВО**

# Амăшĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă

**Нихăш чĕрчун та çурине ура çине тăратмасăр, хăй тĕллĕн пурăнма вĕрентмесĕр пăрахмасть. Хăйĕн тĕпренчĕкне куç пек упрать, унăн ырлăхĕшĕн тăрăшать. Эпир, çынсем, вĕсенчен темиçе хут ăслăрах, вăйлăрах аталаннă пулин те пурте пысăк чунчĕреллĕ пулнипе мухтанаймастпăр. Шел те, пирĕн хушăра тин çеç çуратнă ачисене пăрахса хăваракансем те, хăйсен тĕпренчĕкĕсене йĕркеллĕ пăхмасăр, хĕн кăтартса пурăнакансем те тем чухлех.**

Паян тĕлĕнме пăрахрăмăр ĕнтĕ, хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕшĕн эрех ачисенчен те хаклăрах. Ачисене тутлăрах çитерес, хитререх тăхăнтартас, лайăх пĕлӳ парас тесе мар, кунсерен ăçта та пулин мухмăр чĕртес тесе ăшталанса çӳреççĕ. Час-часах тĕл пулакан ӳкерчĕк пулин те, çакă йĕркеллĕ пулăм мар. Ун пек тĕслĕхсемпе кĕрешме тăрăшатпăр, ашшĕ-амăшне «тăна кĕме» хистесе калаçусем ирттеретпĕр. Ачисем умĕнчи хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласа теменнисене РФ Административлă правăна пăсни çинчен калакан кодексăн 5.35-мĕш статйипе явап тыттарма тивет. Анчах административлă протокол çырни хытă чунлă ашшĕ-амăшне «витермест». Çавăн пекех ывăлĕ-хĕрĕсене пăхмаççĕ, çитерес-тăхăнтартасси асра та çук, вĕсене шкула çӳретсе вĕрентсе кăларасси çине те алă сулнă.

Акă, Вăрнарта пурăнакан 29-ти çамрăк хĕрарăм тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçартăмăр. Ăна, ĕçкелеме юратаканскере, эрех кăна кирлĕ. Ачисене пăхмасть, кунсăр пуçне алă çĕклеме те пултарать. Шăпах ывăлне хĕненĕшĕн РФ Уголовлă кодексĕн 116-мĕш стайипе явап тытма тивĕ те унăн. Кунашкал тĕслĕхсем пĕрре кăна мар. Вĕсене тупса палăртассине, çула çитмен ачасене хӳтĕлессине пысăк тимлĕхе илтĕмĕр. Ашшĕ-амăшĕсен вара хăйсем пурнăç панă ывăлĕ-хĕрĕшĕн яваплине манмалла мар. Вĕсенче – сирĕн пуласлăх.

**И.ТИХОНОВА,**
**РФ Шалти ĕçсен министерствин муниципалитетсем хушшинчи «Вурнарский» пайĕн полицин участокри уполномоченнăйĕ.**

# Ветеринарсен те уяв пур

Мускав тата Пĕтĕм Руç патриархĕ Кирилл выльăх-чĕрлĕхе хӳтĕлекен Флорпа Лавра асăнмалли кун – çурла уйăхĕн 18 (31)-мĕшĕ – ветеринари ĕçченĕсен чиркӳ уявĕ пулмалла тесе йышăну тунă.

Ырă хыпар пархатарлă профессире тăрăшакансемшĕн пĕлтерĕшлĕ. Çветтуйсен кунĕнче ветеринарсен уявне паллă тума йышăнни савăнтарать. Калас пулать, çак кирлĕ профессие йĕркеленĕренпе 250 çул çитнине халалласа 2011 çула Пĕтĕм тĕнчери ветеринари çулталăкĕ тесе палăртнă.

**В.МАТВЕЕВ,**
**Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн ветеринари асăрхавĕн пайĕн патшалăх инспекторĕ.**

# Сирпĕтсе ярассипе «хăратнă»

**Иртнĕ эрнере Вăрнарти полицейскисене тревогăпа çĕкленĕ, телефонпа шӳтлеме юратакансем каллех районти пĕр организацире теракт пуласси çинчен пĕлтернĕ.**

Газ валеçекен станцире кăнтăрла иртсен диспетчер шăнкăрав йышăннă. «Çавăрса илетпĕр те сирпĕтсе яратпăр», – илтĕннĕ çамрăк сасă телефонран. Ку сăмахсем шӳт пек туйăнсан та вĕсене ахаль хăварма юрамасть – станцинчен тӳрех РФ Шалти ĕçсен министерствин муниципалитетсем хушшинчи «Вурнарский» пайĕн дежурнăйне пĕлтернĕ.

Полици сотрудникĕсем газ валеçекен станци территорине çавăрса илнĕ. Служба йытти пулăшнипе тата техника хатĕрĕсемпе усă курса тавраллах пăхса-тĕрĕслесе тухнă – шанчăксăр, сирпĕнме пултаракан япаласем тупăнман.

Çак вăхăтрах вырăнти полицейскисем ФСБ сотрудникĕсемпе пĕрле телефон «террористне» те шырама пуçланă. Хăрушшăн шӳтлеме юратакан ăçта пурăннине те, ăна хăйне те тепĕр сехет çурăранах палăртнă. Вăл 13 çулти арçын ача пулнă. Юлташĕпе иккĕшĕ ĕççĕр аптăранă та чуххăмăн телефон номерĕсемпе шăнкăравласа ларнă. Вăйă мĕн патне илсе çитернине хваттере йĕрке хуралçисем пырса кĕрсен кăна ăнланса илнĕ вăл.

Арçын ачашăн ашшĕ-амăшĕн явап тытма тивĕ. Ку ĕçпе материалсене çула çитменнисемпе тимлекен комиссие янă, ачана профилактика учетне илĕç.

Ку тĕслĕхре арçын ачана çула çитменни колонирен çăлса хăварнă. Тĕрĕссипе, телефон «террорисчĕсем» тĕлĕшпе саккун çирĕп, вĕсене ирĕкрен хăтарма пăхнă.

**И.ПЕТРОВА.**

# «Химик – Август» Кубока тавăрчĕ!



(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).

тика партийĕсен представителĕсем Надежда Григорьева тата Игорь Моляков саламларĕç, çитĕнӳсем, паха результатсем патне туртăнма сунчĕç. Тĕрлĕ ăмăртусен çĕнтерӳçисене хатĕрленĕшĕн ачасемпе спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ Юрий Агилов, Хирпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти физкультура учителĕ Юрий Горбунов Чăваш Республикин Физкультурăпа спорт тата туризм министерствин Хисеп грамотисене тивĕçрĕç.

Массăллă спорт юхăмне аталантарассине тӳпе хывнăшăн Александр Романова, Галина Павлована, Александр Политова, Владимир Иванова, Таня Ефимована, Мальвина Михайловлана, Ирина Львована тата Георгий Семенович Семенова, вун-вун спортсмена – Вăрнар районĕн тата спорт шкулĕн грамотисемпе чысларĕç.

Çак кун спортсменсем хăйсен çитĕнĕвĕсене пĕтĕмпех футболистсене, çавăн пекех Китайра пыракан студентсен вăййине хутшăнакан хамăр ентешсене – Вăрнартан тухнă йывăр атлетика паттăрне Вячеслав Ластухина тата çиçĕмле хăвăртлăхпа чупакан Хурăнсур Çармăс хĕрачине Екатерина Горбунована – халаларĕç.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

